ВАҪЛЕЙĔ

# ПИРĔН САС

ЧĂВАШСЕН=
ПАТШАЛĂХ=
ИСТАТТЕЛСТВИ=

ШУПАШКАР 1931

Отпечатано в типографии № 1
ЧУВАШГИЗА
Чебоксары, Канашская, 16.
Уполн. Чувашлита № 1343.
Заказ № 630. Тираж 5100 экз.
Объем $1^{1}/_{4}$ печат. листа

Комуниссен партти йертсе пынипе ёçхалăхĕн пурнăçĕ сотсиалисăм çулĕпе пысăк хăвăртлăхсемпе утнă вăхăтра пирĕн литтераттурă та васкавлă ÿсет. Ёçхалăх хушшинҫен писсаттĕлсем, поетсем шăта-шăта тухаççĕ. Малтанах вĕсем çтена хаçаҫĕсем çине саметкăсем, сăвăсем, кĕске фелйеттонсем, т. ыг. те çырса тăраççĕ. Литкрушоксем орканисатсилесе, унта пĕрле ĕçлесе çырма вĕренеççĕ Алçырăвлĕ литтераттурă шурналĕсем кăларса пырса пĕрпĕрин сăвви-калавĕсене тишкерсе çитменлĕхсене кăтартса пыраççĕ. Йулашкинҫен хайсен сăввисем, оҫҫĕркĕсем, калавĕсем, пиҫетленекен хаçат-шурналсем çинҫех вырăн йышăнма пуçлаççĕ.

Çавăн пек пирĕн çул. «Пирĕн сас» та çакăн пек пулса тухнă. Ку спорнĕке тухнă сăвăсем нумайăшĕ пиҫетре пулнă. «Май уйавĕ», «Ĕç çинҫе», «Çĕнĕ пурнăç», «Çамрăк çар» йатлă сăвăсем кăна ниăçта та пиҫетленмен. Пурте 1928-мĕшпе 1929-мĕш çулсем хушшинҫе çырнă сăвăсем (сăвăсем çырма еп

1927-мĕш çулта пуçланă, йалкор ĕçне 1926-мĕш çулта тытăннă). Ку çулсенђе сырнисем спорнĕкре пурте мар. Ађасем ваљљисене кăна суйласа пухнă. Паллах, çитменлĕхсемсĕр теме çук. Вĕсем çине вулакансем кăтартса парĕç, тетĕп.

АВТТĂР.

Шупашкар, 20-V—31 ç.

# ОКТĂПЕР ЙАНРАВĔ



**Пирен сас.**

Çутă шуçăм.
Сывлăш уçă.
Кăкăр ирĕккĕн сывлаť.
Пĕр канмасăр,
Ним ырмасăр,
Пурнăç ўсĕмлĕ шăваť.

Такăр çуллă,
Анăçуллă
Йăлт машшинăн вăл ташлаť,
Ăшă çилĕ,
Çур кĕввиллĕ
Аллипе тек аĵашлаť.

Тапăçатпăр,—
Йăлт тăватпăр
Çĕнĕ пурнăç ĕмĕтне.

Ак çитес çĕрех
Çитетпĕр—
Хӳтеретпĕр пурнăçне.

Хир, йалсем те,
Хуласем те,
Пурте путнă хĕвеле.
Пурте хĕрлĕ
Пĕсехеллĕ.
Йалав çакнă тӳпене.

Çук, çитменлĕхсĕр
Темеcтпĕр—
Ђăрмавсем те пит нумай,
Анђах епĕр—
Шикленместпĕр,
Йалт таптатпăр сиснĕ май.

Виђкĕн саслăн,
Пит хаваслăн
Комсомол йурри йанрать.
— Йалан хатĕр!—
Пит те паттăр
Пионер салђут парать.

Пăнтăр, пăнтăр
Пăнтăртатрĕ
Пирĕн çĕнĕ параппан.
Пионерĕ:
— Килĕр! терĕ.
Ропок тытнă ман аппа.

Ĕçлĕр, йурлăр,
Паттăрланăр,
Пур ĕçхалăх аҫисем.
Вут-хĕм витĕр
Тухнă епĕр—
Çут Октапĕр калҫисем.

**Çĕнĕ пурăнăç.**

Ҫасатпăр,
Йусатпăр,
Пуратпăр—
Ӳсетпĕр.
Тăватпăр çĕн пурнăç йăлтах.
Кив никĕс вататпăр.
Тĕппех вăл тĕпрентĕр,
Ей, васкăр, пур çамрăк,
Хĕрӳллĕн татах!

Опосĕ, опосĕ...
Куçаççĕ вĕçхĕрсĕр.
Тийенĕ тĕш тырă
Патшалăх ваҫҫи.
Мăн утăм тăватпăр,—
Ĕçлетпĕр ним шиксĕр,
Ырмаст вăл нихçан та
Ĕçхалăх алли.

Васкатпăр,
Васкатпăр—
Хĕрӳллĕн ӳсетпĕр.

Ĕçлетпĕр,
Çийетпĕр пĕрлех...
Колхос та
Комунă
Тавай пире, тетпĕр...
Хирте те
Килте те,
Машшинă кĕрлет.

**Уйав.**

Ăш хĕвелĕ, ех, илемлĕ.
Саншăн пурте саслă.
Ех, аннеçĕм те, аппаçăм,
Аслă кун — хаваслă.

Ђалкăшатĕ, вĕлкĕшетĕ,
Шайан çут йалавĕ;
Савăнмашкăн систеретĕ —
Хĕнсем иртнĕ халĕ.

Йанăрасшăн, савăнасшăн
Йăтрăм КИМ йалавĕ,
Ман аннешĕн — ĕçаллишĕн
Ђаплă ĕç уйавĕ.

Ăш хĕвелĕ, ех, илемлĕ.
Саншăн пурте саслă.
Ех, аннеçĕм те, аппаçĕм,
Аслă кун — хаваслă.

## Пионер йурри.

Тăнкăр-тăнкăртатрĕ
Параппан сасси.
Йан йанах йанрарĕ
Пионер йурри.

Малта комсомолĕс
Çул йертсе пырать.
Пионер сăмахĕ:
Хатĕр пул йалан.

Тăшмана таптатпăр
Епĕр пĕтĕмпех.
Çапăçатпăр епĕр,
Çапăçу пĕтмен.

Тĕнҫипех тăваспăн
Епĕр пĕр çемйе.
Кĕрешерха унпăн,
Кĕрешер, ĕçлер.

## Пирĕн çул.

Кашни кун ÿсетпĕр епĕр,
Кашни кун ĕçре ку çар.
Пирĕн çул,—тесен пĕлеттĕр,
Пирĕн çул хисепсĕр мар.

Ĕç аҫи пĕрле—пĕрлешнĕ,—
Тĕрк, тутар, ҫăваш пĕрлех.
— Пĕрлешÿшĕн вĕт кĕрешнĕ,
Пĕрлешÿллĕ ĕç вирлех.

Кӗвӗҫет тăшман, сисетпӗр:
Хăй шăлне пӗрмай хăйрать.
Ҫăтаймасть пуҫ кӗвӗҫмесӗр—
Ана вилӗм йăхăрать.

Улт пайран пӗр пай саланҫӗ
Пур тӗнҫешӗн вăй хурар.
Ҫикӗрех тăрать хуралçă—
Ҫикӗрех мӗлйунлă çар.

Ҫӗр йунпах ҫўхенҫӗ, ҫăтрӗ,
Ҫӗр йунпах исленҫӗ çӗр.
Ех, мӗнҫул, унҫух çын пӗтрӗ...
Ҫӗр йунпах исленҫӗ çӗр.

Епӗр, епӗр хаҫ ўсетпӗр
— Кам ўсет?—йун тăкнă çар.
Хӗм ўкмен çӗре ўкерпӗр—
Çӗнӗ çулăм, çӗн кăвар.

Ку куна курман истори
Кун пекки пулман нихçан.
Хапрăк. Савăт. Хир—тӗш тырă!—
Ёç аҫи ўсет пайан.

## Октапӗре.

Ес пӗлмен, хиртен еп килнӗ
Ес пӗлмен, хиртен,—тесен...
Ёç аҫи пайан хут илнӗ,
Ёç аҫи тесен пӗлен.

Кĕреке тулли ларатпăр
Пур ĕçхалăх аҫисем.
Епĕр йăлт çĕн йур йурлатпăр
Çурхи çамрăк калҫасем.

Хăрататҫĕç çав темтепĕр
— Стăршшина вăл,—тессипех.
Шикленеттĕмĕр çав епĕр
Пар шăнкравĕн сассипех.

Шикленеттĕмĕр те ĕлĕк
Пытанаттăмăр илтсен,
Астăвап пăртак, те тĕлĕк?—
Питĕрнеттĕмĕр килсен.

Епĕрех çапса ҫăпта та,
Ҫăптапах иртеҫҫĕ çĕр,
Ҫăптаçа паллан таçта та:
Шап шурах шуралнă хĕр.

Пирĕн çул тӳлек хаҫ, тӳрĕ
Вĕт Октăпĕр тивлеҫпех.
Вĕренме пире те пӳрнĕ:
Вĕренер, ӳсер ĕçпех.



# КĔРХИ ТИВЛЕТ

**Авăн кĕвви.**

Пăтăлтик-паттик, пăтти-пат
Йĕтем çи йанраТçке.
Пăтти-патти, пăтти-пат:
Тáпаҫ тыр вартатçке.

Йĕтем тулли капансем
Кĕрхи тулăх килҫĕ.
Ретĕн, ретĕнех вĕсем
Йĕтем тырпул илҫĕ.

Пăтăлтик паттик, пăтти-пат:
Улттăн сасси, улттăн.
Пăтти-патти, пăтти-пат:
Ех, тыррийех ылттăн.

Ылттăн тĕслĕ тыррине.
Тирпейлех тытатпăр.
Сар хăмаллă пурине
Ылттăн пек пухатпăр.

Пăтăлтик-паттик, пăтти пат:
Йышлăн ĕç аванçке.
Пăтти-патти, пăтти-пат:
Ех, ĕççем пахаçке.

Ҫӗл каҫмаллӑх пуҫтарсан,
Йулнине тийетпӗр:
Хӗрлӗ опоссем туса
Хулана леҫетпӗр.

Интустрийӗн сайомпе
Интустри тӑватпӑр.
Ӗҫ васкавлӑ пӗтӗмпех
Пурнӑҫа хурҫлатпӑр.

Шӗнкӗлик шанкик, шӑнки-шак:
Машшинах ӗҫлетҫке.
Вӗлтти-ваҗтти, вӗлтти-ваҗт
Ҫӑмӑл ӗҫ килетҫке.

Коллективлӑ ӗҫлесех
Ҫӗн тӗнҗе тӑватпӑр,
ӗҫ тӑватпӑр вӗҫлесех,
Комуна куҫатпӑр.

Тутти-тутти, тутти тут!—
Савӑт кӑшкӑртатпӑр.
Тинки-танки, тинкки-танк:
Трактӑрсем тӑватпӑр.

Пӑтӑлтик-паттик, пӑтти-пат:
Ӗмӗр епӗр йышлӑн.
Пӑтти-патти, пӑтти-пат:
Ӗмӗр коллектившӑн.

Пӑтӑлтик-паттик, пӑтти-пат:
Ултт̆ан сасси, ултт̆ан.
Пӑтти-патти, пӑтти-пат
Ех, тыррийех ылтт̆ан.

## Кĕрхи кун.

Йăвăççем йăлтах саралҫĕç,
Хуйха ӳкнĕ пек вĕсем,
Курăксем хирте хуралҫĕç—
Хытса йулҫĕç ерĕмсем.

Ҫĕпĕтет питрен кĕр çилĕ,—
Систерет пайан хăйне.
Кăпка йур, хăçан ес килĕн,
Хăçан килĕн çĕр çине?

Хатĕрлет сӳсне анне те —
Пĕҫĕкрен ун — кăнҫала.
— Йăлăхтарҫĕ пуҙ, анне, теп,
Миçе çул сӳсе ҫаван?

Йăлăхтарҫĕ пуҙ тылли те—
Çурăк саслă ĕмĕрех.
Сӳс — пĕрмай, пĕрмай ал витĕр
Йĕкĕрлҫин те пĕр тĕррех.

Пĕлмеллех, анне, ак курăн—
Ес те арлăн машшинпах.
Палли çук нимскер те „туррăн“—
Кирлине тăваĭ çынах.

Кĕркунне, паллах, сӳс-кантăр,
Сӳс тĕвеççĕ килĕпех.
Хаҙ — çĕнни
Кисип те вантăр—
Урăх майпа тӳмелле!

## Присывнĕк йурри.

Пирĕн йаштак шăмшак пит çăмăл,
Çĕн присывшăн хĕпĕртет,
Çĕн присывшăн усвă кăмăл
Сыхлăх ĕçшĕн çĕкленет.

Хамăра айван теместпĕр,
Хатĕр сыхлăхшăн тăма.
Ĕçлĕ çаршăн ўркенместпĕр
Ун тăшманĕпе вăрçма.

Пирĕн ўтпĕвĕм пит те çирĕп
Çирĕпленнĕ çĕн вăйра;
Шапшурахçке, çук вĕт кирĕк,
Уртăнсам, пăшал, хулран.

Хамăрах ĕçе сыхлатпăр—
Хирпе савăт аçисем,
Пĕçĕкрен ĕçпе сывлатпăр
Çĕнĕ пурнăç калçисем.

Камха, кам ĕçе сыхлатăр
Ĕçлĕ халăх мар пулсан?
Ĕретленнĕ епĕр, хатĕр,
Пайан шăпа илсен.

Çĕнĕ савăт веçех хурăç,
Сирпĕнеççĕçке хĕмсем.
Пур ĕçхалăх ăна турĕç
Çавăнпа хастар вĕсем.

Кирек кам шăлне хăйратăр...
Анҫах епĕр хăрас ҫук!
Пур вĕт пирĕн танккăсем те,—
Шанҫăк ҫуким пирĕн те?

## Епĕр хатĕр.

Хавасланнă,
Епĕр хатĕр!
Присыва кĕтетпĕр.
Ех, йалавĕ вăлҫăр-валҫтăр,—
Хатĕр, хатĕр, тетпĕр.

Йаланах та вут ҫĕреллĕ.
Ҫуким пирĕн шанҫăк?
Ĕç ҫине тăшман кĕреймĕ,
Кĕрсен пулĕ ванҫăк!

Ĕç аҫийĕ каймасассăн,
Камха ĕçе сыхлĕ?
Ей тавай йурлар пĕр саслăн,
Епĕр халҫ мĕн ҫухлĕ?

Хĕрлĕ çар вăл ĕçлĕх шкулĕ,
Камха кайас темĕ?
Турккестан кил-ҫурт ак пулĕ,
Камха хĕпĕртемĕ?

Кив тĕнҫе пире киревсĕр,
Пур ҫĕртен те сирĕр.
Кив тĕнҫе тĕппех кисрентĕр—
Алăмăрсем тимĕр.

Тăшмантан наҫарим епĕр?
Ҫуким пирĕн шанҫăк?..
— Епĕр йышлăн, виҫкĕн, тетпĕр,
Тăшман пулĕ ванҫăк.

Йаланах та: тăнкăр, тăнкăр,
Йышлăн, йышлăн епĕр.
Епĕр, епĕр—ҫав утатпăр!
Епĕр! Епĕр! Сирлĕр!

**Хĕл умĕн.**

Йĕпкĕн шурă ҫăнăх пек
Лăпсăр-лăпсăр йур ҫăваť.
Ав, ҫанталăк сивĕтет,
Йерипенех хĕл пулаť.

Ҫук, кĕтменҫĕ хĕллене,
Килетех тем пур пĕрех.
Выҫăх-ҫĕрлĕх картана
Кĕрсе тăҫĕ ăшăнма.

Сăхмансем те, алшишсем
Хатĕрлеҫҫĕ аннесем.
Епĕр, ҫамрăк аҫасем,
Хатĕрлетпĕр кунккисем.

Хатĕрлетпĕр кунккисем,
Хатĕрлетпĕр йĕлтĕрсем.
Кĕҫ тытатпăр кĕнеке—
Пикенетпĕр вĕренме.

Ыр кĕççе пек çеремсем
Купалатпăр пӳрт тавра.
Ăшă пултăрççĕ, тесе
Шухăшлатпăр хамăра.

Сыснасен те çурисем
Нăриклелетрĕç ир ирех.
Йăткалаççĕ улăмсем
Хăтăласшăн сивĕрен.



# ХЁЛ КЁВВИСЕМ

**Йĕлтĕрпе.**

Йĕлме йĕлтĕр—
Йăлтăр, йăлтăр;
Шуса тухрăмăр хире.
Йур пĕрҫийĕ—
Хĕл мерҫенĕ
Ех, илемлĕҫке ирпе.

Уҫă сывлăш,
Ирхи сывлăх—
Ҫупса кĕҫĕҫ ман хĕве.
Те выљасшăн,
Те куласшăн
Кăтăклаҫҫĕ ӳт-пĕве.

Ех, аванҫке,
Ех, пахаҫке
Ҫăртсем урлă йарăнма.
Йака йĕлтĕр
Ҫĕлтĕр, ҫĕлтĕр
йур сирет ир ман умра.

Йарăнсассăн—
Пит хавассăн

Таварнатпăр килелле.
Таварнсассăн,
Кăшт кансассăн—
Кĕç тытатпăр кĕнеке.

Çамрăк вăхăт...
Ӳсме хăварт
Тăрăшатпăр ку ђухне.
Ёçлесси те,
Йарнасси те
Пурте кирлĕ çамрăкне.

**Ирхине.**

Ир тăрсассăн,
Пит çусассăн
Кĕç ђупатпăр шкулалла.
Шкула çитнĕ,
Руђкă илнĕ,
Вĕренетпĕр малалла.

Перемена.
Йĕркеленнĕ
Ађасем апат çиме.
Ретĕн, ретĕн те
Ђеретĕн,—
Ретĕн, ретĕн пай илен.

Çийесси те,
Ёçлесси те
Пĕрлешӳллĕ хађ йăлтах.

Пай илсессĕн,
Ир çисессĕн
Руҫкă, крифĕл тыт татах.

**Путексем.**

Хаљ колхосăн выљăхсем
Хăрамаççĕ сивĕрен.
Вăрăм çăмлă сурăхсен
Ним щăвмаççĕ витере.

Мăтăр мăтăр сурăхсем
Мунҫа тулли путексем
Ҫалттик ҫалтти урайĕнҫе
Сиккелеççĕ ир çинҫе.

Ех, ташлассăмах килет
Вĕсемпе ман мунҫара.
Ыталатăп путеке,—
Аҫаплатăп,—йуратап.

**Вилми ђёреллё Ленин.**

Ах, ЛЕНИН... ЛЕНИН...
Теççё пайан пур те.
Ленин çук çав...
Хупнă вăл куçне.
Хура хăмађ...
Вёл-вёл тумасĭ вёрсен те,
Ленин çук та—
Хуйхăлла тёспе.

Пăх—темле хаљ,
Хуйхăллă йăвăççем те
Пуççем тайнă...
Сиснё тем ирех
Ах, ЛЕНИН... ЛЕНИН...
Теççё пек вёсем те
Хăйсем пăхнă тăлăххăн хире.

Киттай
Маншур...
Пиллеççё пин ёçхалăх—
Тёнђипех вăл паллă,
Тёнђипех.
Шывсем,
Тусем
Хурланђёç çак пёр талăк
Салху йурă илтрёç ун çинђен.

Вилмен!
Вилмен!
Вилми ђёреллё Ленин.
Ун ђёрийё,

Еҫĕ—
Пирĕнпех.
Пирĕнпех вăл Ленин—
Сывă аслă кений.
Ленин сывă ĕмĕр ĕмĕрех.

Ленин—
Партти.
Ђăн хурҫă ђăмăркка пек—
Ленинпах вăл халђ те,
Ун ҫулпех.
Ниҫта пăрăнман!
Утатпăр,
Хăвăрт
Пинĕн
Ун ҫулпех,
Ўсетпĕр
Ун ĕҫпех.

### Ленина асăнни.

Урам тулли ĕҫ ађисем
Хуйха ўкнĕ, утаҫҫĕ.
Йĕпкĕн хура йалавсем
Пайан вĕл-вĕл тумаҫҫĕ.

Пуҫне тайнă йăвăҫсем
Аслă ҫулпуҫ вилнĕшĕн.
Кулђанаҫҫĕ вĕсем те
Ленин аіте ҫуккишĕн.

Салут тытрӗ пионер
Ленин вилне, тесессӗн.
— Епӗ хатӗр ӗмӗрех
Ленин хушнӑ ӗҫсемшӗн.



# ÇУРХИ ХАВАСЛĂХ

**Çур умĕн.**

Кăпка йурĕ
Нăтăртатрĕ,
Хĕпĕртерĕç аҫасем.
Ав, васкаççĕ.
Хавасласçĕ
Çуркунненĕн паллисем.

Салакайăк
Çатан айĕн
Сиксе тухрĕ урама.
Хĕпĕртерĕ,
Ҫĕвĕлтетрĕ
Кĕç ташлас пек ман умра.

Ăшă çилĕ
Вĕçсе килнĕ:
Ҫуп тăвасшăн тутаран.
Çар хĕвелĕ
Пит телейлĕ,
Çур пăхать ав кантăкран.

Ма ларасха,
Пăҫăхасха
Уçă сывлăшсăр пӳртре?

Çӳремешкĕн,
Килленмешкĕн
Вĕренесха пĕҫĕкрен.

Тăрисем те,
Шăнкăрҫсем те
Ҫĕвĕлтетрĕç йăлипе.
Ĕх, тухас пуљ,
Хатĕрлес пуљ,
Ĕрешлес пуљ йăвине.

— Хатĕрлесха,
Ĕрешлес-ха,
Симĕс ҫăрăш лăссипех.
Шăрантарҫҫăр...
Савăнтарҫҫăр...
Ир пулсассăн сассипех.

Ей, хăнаçăм—
Çуркуннеçĕм,
Парха, пар ес, аллуна!
Ҫеҫексемшĕн
Ĕх, илемшĕн
Тек кĕтетпĕр вĕт сана.

Аҫасем те,
Ҫăх-ҫĕпсем те
Хирĕç тухнă хăнана.
Камха, камха
Хавасламĕ
Шур ҫеҫеклĕ тăвана?

## Хатĕр пулăр.

Аŏăр, аŏăр çуркунне не
Хирĕç тухар, аҫасем.
Хĕвел кулаŏ, илемленет,
Симĕсленеç калҫасем.

Йĕлтĕрсене, куҫккисене
Ампаралла пуçтарар.
Меҫкĕсене, вăлтасене
Хатĕрлеме хаҫваскар.

Тăрас килмест пайан пўртре
Выҫас килет урамра.
Ех, йăвăçсем ытах хитре
Пайан йăлтах хунавра.

## Акана хатĕрленни.

Ҫĕвĕл, ҫĕвĕл йурласа
Ҫупса килҫĕ çуркунне...
Пирĕн колхос васкаса
Ака хатĕр хатĕрлет.

Лăпсăр, лăпсăр тасатаŏ
Сорттировккă колхосра.
Комсомолĕс пулăшаŏ
Тасатмашкăн вăрлăха.

Хăшĕ сарă ҫĕреспе
Ăскалаççĕ сĕллине.
Таса тырă ылтăн пек—
Тултараççĕ йешҫĕке...

## Ђӗпӗсем.

Хаљ ђӗп амӗш инкупаттӑр, —
Ашӑтат те ђӗп парат.
Хӗпӗртетпӗр ђӗп куратпӑр—
Инкупаттӑр кӑларат.

Ҫӑтӑр, ҫӑтӑр ҫӗмӗреҫҫӗ,
Ҫӑмартийӗн хуппине.
Ђӗвӗл ђӗпӗсем тухаҫҫӗ,
Ђупкалаҫҫӗ сиккипех.

Сар ҫилхеллӗ, пӗсехеллӗ,
Каҫӑр кӑкӑр, ҫырӑ куҫ.
Патисем: сапсар, илемлӗ,
Кикирик тӗриллӗ пуҫ.

Шипӗл, шипӗл шипӗлтетрӗҫ
Хавасланђӗҫ ђӗпӗсем.
Тухнӑ ҫемӗн хӗпӗртерӗҫ,
Ҫырӑ куҫлӑ тем вӗсем.

## Май уйавӗ.

Ей, йурлӑр,
Ей, йанрӑр,
Пур ҫамрӑк хәваслӑн.
Ђуралӑх кисрентӗр,
Тӗпрентӗр тӗппех.
Ех, камха йурламӗ
Пур йышлӑн тӑрсассӑн?..
Урамӗ хумханнӑ—

Măн тинĕс пекех.
Йалавĕ...
Йалавĕ...
Вĕçхĕрсĕр вĕçеççĕ.
Кĕрлет пролеттари—
Вут-хĕм сирпĕнет.
Ĕçхалăх мĕлйунăн—
Таттисăр куçаççĕ...
Пайан Май уйавĕн
Хĕвелĕ хĕртет.

## Ўсĕм.

Хаҕ утатпăр-такăнмастпăр,
Пурнăç çулне уçнă.
Електритсă: йăлтăр, йăлтăр
Пăлтăр пуçне куçнă.

Пит патмарăн—мĕлйуншарăн
Утăр, харăс пусăр!
Пирĕн ĕмĕр—тулли сарăм,
Пирĕн ĕмĕр—хурçă!

Ир пулсассăн савăт сасĕ
«Килĕр, ĕçлĕр» тетçке,
Савăнатçке Вăрман-касĕ
Саспа хĕпĕртетçке.

Йан!.. йанратăр пирĕн кĕвĕ
Тинĕс, вăрман урлă.
Савăнмасăр çамрăк пĕвĕ—
Епĕр çутă курнă.

Йешĕл тăрă аслă Атăл
Таса кĕмĕл тĕслĕ.
Çĕкленетçке ĕçшĕн хапăл,
Усĕмпе вăл туслă.

Руҫкă, крифĕл, шурă хуҫĕ
Пире хатĕр пулҫĕç,
Çавсене епĕр йуратнă
Ылтăнпа çутатнă.

Ех, аван мĕн çутă пурнăç,
Сехетпех вĕт ӳсĕм...
Усĕм, тӳсĕм—тимĕр, хурçă
Хурçă çарăпăр ӳлĕм.

**Вăрманта.**

Ех, вăрман каш-каш кашларĕ,
Ăшă çилпе туслă.
Пăхха, пăх—шевле ташларĕ,
Пăхха, пăх ес, тусăм.

Ҫеҫексем çинҫех хĕвелĕ
Иалтăр питлĕ—куçлă.
Ҫеҫексем çинех сĕвенĕн
Вĕсем пурçăн пуçлă.

Хăнара вĕт епĕр йышлăн—
Çамрăк ҫеҫек, йышăн!
Йаланах сана саватпăр,
Савăнсах тататпăр.

Симĕсленнĕ, тикĕсленнĕ,
Аҫашланнă хурăн.
Туратсем йăлтах вĕҫленнĕ,—
Ҫĕрте симĕс курăк.

Ҫĕмĕрт йăпăш ҫивĕтленнĕ,
Шурă тутăр сыхнă.
Ҫĕмĕрте пăхса килентĕм,
Ех, кăтрисем йышлă.

Ҫĕмĕрт темшĕн аҫашларĕ,
Алла ҫăмăртарĕ...
Ҫук, суйатăп: апла марҫҫĕ,
Хам ҫумра ҫеҫ ларҫĕ.

Хăвасем патмар ӳсеҫҫĕ,
Пур хăва пĕрлешнĕ.
— Ăмăртсах ӳсерха,—теҫҫĕ,
Хырсенҫен иртесшĕн.

Епĕр те патмар ӳсесшĕн,
Ей, коловнăн тăрăр!
Хĕвелте пиҫсе тӳсмешкĕн
Пурте ăмăртланăр.

Шăпҫăкпа куккук илемлĕн
Йантратаҫҫĕ йурă.
Камха. кам савса итлемĕ?
Ех, йуррисем ырă.

Уҫă сывлăш, тутлă шăрăш—
Пур ҫĕр-ҫун выҫарĕ.
Тăрă шыв, вăрманĕ шăрăх...
Камха пӳртре ларĕ?

Ҫавӑнпа кунта хаҫ килнӗ,
Йан йанах йурлатпӑр.
Йӑвӑҫҫем лартма шут илнӗ—
Йӗкелсем лартатпӑр.

## Ҫуркунне.

Вӗл-вӗл-вӗл выҫаҫ шевлийӗ,
Хӗрлӗ тутӑр ҫыхнӑ.
Йан йанахҫке ҫур сассийӗ,
Пур ҫӗр-ҫун куҫ уҫнӑ.

Пӑх, хӗвелӗ ылттӑн хыпнӑ
Ҫӗрҫуна хавасла.
Сӑнсӑпаҫӗ вӗри йунлӑ,
Сывлӑш питӗ аслӑ.

Уй куратӑн—кулкалатӑн,
Тарнӑ тӗссӗр пӗлӗт.
Вӗренетӗн, савӑнатӑн,
Ҫамрӑкӑн ҫак ӗмӗт.

Астараҫке уйхир тумӗ—
Хурлӑх тумне хывнӑ.
Килнӗ, килнӗ ҫурхи кунӗ
Хӗл пайан вӑл ырнӑ.

Тӑп тӑр кантӑк,
Тӑр ҫанталӑк—
Кӗмӗл кантӑк тӗслӗ,
Ир-ирех тула тухантӑк—
Уҫӑ сывлӑш вӗҫсӗр...

Ирхи сывлăм йăлтăр-йăлтăр...
Йăлтăркки ҫи илемли.
Йур йурлатпăр—йан йаратпăр,
Хурлăх иртнĕ хĕллехи.

Ĕҫлемешкĕн, савăнмашкăн
Ҫĕр ҫине ҫуралнă.
Ĕҫлемешкĕн, вĕренмешкĕн—
Ак мĕнле халаллă.

Ҫĕввик-ҫĕввик, ҫĕввик-ҫĕввик
Кайăк ҫунĕ ҫĕввĕлтик.
Ĕҫлĕр, ĕҫлĕр, пĕрле ĕҫлĕр,
Савнăҫ килнĕ: ихи-хик!

Вĕлтĕрти, валтĕрти,
Вĕлттик, валттик,
Ҫăлттик, ҫалттик сиккелетпĕр.
Никит-накит, никит-накит
Купăсне те йанрататпăр.

Алăм тулли савнăҫ тытнă
Килĕр, тытса курăр!
Пахҫи-пахҫи кайăк саслă
Салтăр, алăк уҫăр!



# ТЫРПУЛ ВУҬАХӖНҬЕ

**Ҫӗнӗ суха.**

Епӗр те хал҄ трактӑр курнӑ —
Колхос уйне килнӗ.
Кив сухана ватса хунӑ
Ҫӗнӗ трактӑр илнӗ.
Трактӑр ҫутӑ, хурҫӑ шӑллӑ
Ӗҫӗ ҫӗнтерӳллӗ.
Трактӑрпах ӗҫлет ав шӑлӑм —
Колхосрах ҫӗнелнӗ.
Ех, аван мӗн трактӑр сасӗ
— Тра-та-тат!.. йантратат̆ҫке.
Ҫӗкленет хресҭен хавасӗ.
Трактӑрпах ӗҫлетҫке!
Сехетрех мӗн: ҫӗнӗ, ҫӗнӗ —
Ҫӗнӗ кунсем ҫитрӗҫ...
Йртсе кайрӗ хресҭен хӗнӗ —
Кив сухана сирҭӗҫ.
Хитререн хитре хӗвелӗ,
Ех, кулат̆ илемлӗн.
Хир ҫине ӳкет илемӗ —
Ҫӗннинех сават̆ мӗн.
Трактӑр, трактӑр! Ех, сассийӗ!..
Хир илемне кӳрҭӗ.

Йăр, йăр, йăр шуçать кассийĕ—
Хир пайан ĕç пӳрҫĕ.
Еп çуралнă коллективщăн
Еп ăнах халаллă.
Ех, куьта вĕт епĕр йышлăн
Пирĕн ĕç хаваслă.
Сухара-хирте еп ӳсрĕм
Сухарах пиçсе вĕт.
Ĕç аҫи пулса ĕç тӳсрĕм—
Ĕç аҫи вĕт епĕр
Сухара пайан илемлĕ,
Пайан хир çĕнелнĕ.
Савăнса сухаç йурларĕ
Трактăрах ырларĕ.

## Хурçă ут.

Кĕр-кĕр-кĕр кĕрлерĕ трактăр
Машшинланҫĕ пирĕн хир.
Сăмах мар—ҫăнах тăватпăр
Хурçă çурт пуратпăр ир.

Плукăн та иртет ак ĕмĕр,
Тăваратпăр утсене.
Хурçă ут йăлтах кĕрлетĕр,
Колоншарăн вăл килет.

Сухалать вăл ним ырмасăр,
Çĕре хулăмăн сĕвет.
Анасем ку ҫух йăрансăр,
Анасен нумай сĕткен.

Талккиппех колхосӑн ҫӗрӗ:
Тӗрлӗрен тырпул кашлаҫ.
Хурҫӑран тӑватпӑр ӗмӗр,
Кунӗн-ҫӗрӗн пурӑнаҫ.

## Ҫӗнӗ хирте.

Ирхи сывлӑм, йешӗл курӑк —
Илемлеҫҫӗҫке хире;
Курӑксем кунта йӑлт урӑх
Килӗшеҫҫӗҫке пире.

Пӑх — ыраш шупка ҫилхеллӗ,
Пӗвӗ ҫитнӗ хӗр пекех,
Ҫил ҫине темме ҫиленнӗ,
Ҫуп тумасҫ ҫӗре текех.

Ҫӗн хирте вӗт тӑхӑр пусӑ;
Тӑхӑр пусӑн тӑхӑр тӗс:
Тӑхӑр пусӑн ҫӗнӗ усӑ —
Виҫ пусра пулман кӗтес.

Ку хирте шултра ыраш вӗт;
Пуҫах йӑвӑр, выҫанаҫ...
Путене йӑран шыраҫ тӗк,
Йӑран ҫук мӗн — куҫанаҫ!..

Путене тус, ан куҫан ес,
Кив йӑраншӑн куҫҫуҫпех,
Ҫӗнӗлле хирте пурнан ес,
Тух та ҫуп хаҫ хир ҫулпех.

Ех, йаштак ыраш пит селём
Вăл çĕнелнĕ çĕн хирте;
Трактăрпа акса çӳрерĕм,
Çампа та илем ирпе.

Тимлесех хĕртет хĕвелĕ
Пĕçересшĕн вăхăтра.
Çил текех тырра хĕнемĕ
Пуҫахсем ытах кăтра.

**Ĕç çинҫе.**

Ирпе ирех
Хирĕ тӳрех
Пихеннĕ ĕç çине.
Хире çитсен,
Илем витсен--
Каллех машшин ĕçлет.

Каштин каштин,
Вăштин ваштти
Вăшлаĭ уй ирхине.
Ир ирлесех,
Хĕпĕртесех
Параĭ тĕш тыррине.

Пикенетех
Килленетех
Ĕçхалăх халҫ хирте.
Нумай пусса
Курма усса
Аксаха вĕт вир те.

Курса ђăнах,
Ула-ђăлах
Виç пусăн тыр усси;
Ак хаљ çĕмел
Шута кĕмеп,
Татах улма пусси.

Тырпул пиçсен,
Çук ђух писен
Илемçке тыр пусси.
Пуђах тулсан,
Ђипер пулсан
Пахаçке ун усси.

Илемлĕçке,
Хŏрететçке
Хирти хĕвел ăшши.
Унпа пиçсе
Вĕш-вĕшлесе
Кŏрет пуђах тĕшши.

Йал касђенех,
Сĕм пĕђђенех
Ларат вăл хуйхăрса.
Хресђен ĕçђен,
Сĕм тĕттĕмђђен
Кĕмест хаљ тыр вырса.

Пĕр вăхăтра
Ыраш кăтра
Пиçсен пире кĕтмест.
Хаљ çампа та

Ыран татах
Ирех хире...
Пайан хир ĕç пĕтмест.

**Çамрăк çар.**

Малаллах пĕрмай пирĕн ĕмĕт...
Ей, ÿсер!
Татах ÿсер!
Кинемей, пирĕнтен ан тĕлĕн!
Ҫăн пропеллĕр пек
Кĕрлер!

Алла ал тытсах ĕçлетпĕр.
Пионер — мĕлйунлă çар.
Пĕрлешÿ тăвасшăн епĕр
Пĕрлешÿшăн çапăçар,

Коллектив, комунă, тетпĕр.
Коллектив, кĕреш, кĕрле!
Çĕнĕлех йалан ĕçлетпĕр,
Ей, татах ÿсер пĕрлех!



# ТУПМАЛЛИ.


Стр.

Умсӑмах . . . . . 3
Пирӗн сас . . . . . 5
Ҫӗчӗ пурнӑҫ . . . . . 7
Уйав . . . . . 8
Пионер йурри . . . . . 9
Пирӗн ҫул . . . . . —
Октапӗре . . . . . 10

КӖРХИ ТИВЛЕТ

Авӑн кӗвви . . . . . 12
Кӗрхи куя . . . . . 14
Присывнӗк йурри . . . . . 15
Епӗр хатӗр . . . . . 16
Хӗл умӗн . . . . . 17

ХӖЛ КӖВВИСЕМ

Йӗлтӗрпе . . . . . 19
Ирхине . . . . . 20
Путексем . . . . . 21
Вилми ҫӗрелле Ленин . . . . . 22
Ленина асӑнни . . . . . 23

ҪУРХИ ХАВАСЛӐХ

Ҫур умӗн . . . . . 25
Хатӗр пулӑр . . . . . 27
Акана хатӗрленни . . . . . —
Ҫӗпӗсем . . . . . 28
Май уйавӗ . . . . . —
Ӳсӗм . . . . . 29
Вӑрманта . . . . . 30
Ҫуркунне . . . . . 32

ТЫРПУЛ ВУҪАХӖНҪЕ

Ҫӗнӗ суха . . . . . 34
Хурҫӑ ут . . . . . 35
Ҫӗнӗ хирте . . . . . 36
Ӗҫ ҫинҫе . . . . . 37
Ҫамрӑк ҫар . . . . . 39